27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 АПРЕЛЬ 22 ШАМАТКУН 80(6575) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракине кăтартуллă ирттерессишĕн ăмăртăва хутшăнар!

Пирĕн хаçатăн ĕнерхи номерĕнче Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене, агрономсене вăйлă тырпулшăн кĕрешме Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе калани пичетленсе тухрĕ. Çураки умĕн пухăнса, вĕсем ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăх ĕçĕсен 1944 çулхи планĕ çинчен йышăннă постановление тимлĕн сӳтсе-явнă. Ун хыççăн вара çуракине питех те лайăх ирттерессишĕн, вăрçă вăхăтĕнче вăйлă тырпул туса илессишĕн мĕнпур колхозсен, уйĕç тата трактор бригадисен, звеносен, мĕнпур колхозниксемпе трактористсен социализмлă ăмăртăвне организацилеме чĕнсе каларĕç.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешме Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пуçарса яракансем илнĕ обязательствăсем тырпул тухăçлăхне ӳстерме, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине лайăх пахалăхпа тата вăхăтра ирттерме, кăçал тĕштырăсен пĕтĕм хисепне ӳстерме пулăшаççĕ. Вĕсен обязательствисенче колхоз хресченĕсем Совет государствин пурнăç интересĕсемшĕн пархатарлăн тăрăшни яр-уççăн курăнса тăрать. Краснопутиловецсен чĕнĕвĕ — çуракине кăтартуллăн ирттермелли программа пулса тăрать.

Ялти коммунистсемпе комсомолецсен вăйлă тырпулшăн кĕрешме Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе каланине халех мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем тата агрономсем патне çитермелле. Вĕсен Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем чĕнсе каланине сӳтсе-явнипе пĕрлех, пирĕн республикăри кашни район, колхоз, бригада, звено конкретнăй обязательствăсем илмелле тăвас пулать.

Пирĕн республикăри кашни районăнах, колхозпа бригадăнах тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пыма пысăк майсем пур. Çав майсемпе туллин усă курса ĕçлесен, тракторсемпе, туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курма пĕлсен, ĕçе тĕрĕс организацилесен, ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тĕпрен лайăхлатсан, республикăри колхозсемпе МТС-сем кăçал иртнĕ çулхинчен тухăçларах тырпул туса илме пултараççĕ. Партипе комсомолăн ялсенчи организацийĕсен халĕ хăйсен организаторла ĕçне татăклăнах вăйлатмалла. Коммунистсемпе комсомолецсемшĕн халь çураки ĕçĕсене лайăх организацилесе пырассинчен хисеплĕрех задача урăх çук та.

Республикăри хăшпĕр колхозсем çурхи уйхир ĕçĕсене пуçăнчĕç. Калинино, Тăвай, Красноармейски, Куславкка, Сĕнтĕр районĕсенчи колхозсем ик-виçĕ кун хушши ĕнтĕ кĕрхи тырăсене апат параççĕ, клевер акаççĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешме çуракин малтанхи кунĕсенченех тытăнас пулать. Çуракине кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа ирттересси — уйхир ĕçĕсене тумалли тĕп закон пулса тăраççĕ.

Çуркунне кая юлса килни уйхир ĕçĕсене кăçал уйрăмах организованно, вăхăтра пуçăнма хушать. Уйхир ĕçĕсен пахалăхĕшĕн кĕрешни тырпулсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешни пулса тăнине ялан асра тытса, агротехника хушнисене çуракин малтанхи кунĕсенчех тĕплĕн пурнăçлама тытăнас пулать.

Партипе правительство уйхир ĕçĕсен агротехникине çиелтен туса пынине тата тырпулсене пăхса тăрассине япăхлатнине сиенлĕ ĕç тесе шутларĕç. Кăçал республика уйхирĕсенче агротехника ĕçĕсене çиелтен туса пыни тата акнă тырпулсене пăхса тăрас ĕçе япăхлатни пачах пулмалла мар. Агротехника ĕçĕсене çиелтен туса пыни тырпул тухăçлăхне чакарасси патне тата уйхирсене çум пусса илесси патне илсе пырать. Çакна тата иртнĕ çулхи йăнăшсене халех шута илмелле.

Пĕлтĕр агротехника правилисене чылай районсем тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пырайман. Чкаловски, Тăвай, Шăрачкав, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсенче пусуçаврăнăшне пăснă. Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз, сăмахран, пĕлтĕр агротехникăна пăсса, ырашпа çурхи тырăсен пысăк пайне çав тырăсемшĕн иртнĕ çул паха культура акса тунă вырăна акса хăварайман. Унччен ыраш акнă вырăна каллех ыраш акнă, çав лаптăксенчен вара 4-шар центнер çеç тырă пухса илнĕ. Ку çеç те мар, унта курăксем акса тумалли лаптăк пĕчĕкленнĕ. Тимарçимĕç тата çĕрулми акса тумалли лаптăка 22 гектар, нумай çул хушши ӳсекен курăксен лаптăкне 327 гектар пĕчĕклетнĕ. Çавна пула колхозăн выльăх-чĕрлĕхе валли апат-çимĕç сахалтарах туса илнĕ.

Пусуçаврăнăшне пăсакансене хирĕç татăклăн кĕрешмелле. Агротехникăн ытти требованийĕсене те — уйхире çурхи ĕçсем валли тасатса хатĕрлессине, тăпрара нӳрлĕх ытларах тытса хăварассине, тырăсене чи лайăх срокссенче тата вăрлăха тăпрана лайăх витĕнтерсе акса хăварассине, вырăнти удобренисемпе май килнĕ таранах ытларах усă курассине — пĕр минутлăха та манмалла мар.

Малта пыракан колхозсем çак ĕçсене пурнăçа кĕртме тытăннă ĕнтĕ. Иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ Вăрнар районĕнчи колхозсенче çураки вăхăтĕнчи агротехникăллă мероприятисен çирĕп планне тунă. Республикăри ытти хăшпĕр колхозсенче те 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен агротехникăллă мероприятисен планне туса хатĕрленĕ. Колхозсене агрономсемпе тунă агротехникăллă мероприятисене, çав мероприятисене тунă агроном е районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ ирĕк памасăр, пăрахăçа кăлармалла е улăштарма никама та ирĕк паман. Анчах вырăнсенчен килекен хыпарсем хăшпĕр çĕрте вĕсене тивĕçлипе пурнăçласа пыманни çинчен калаççĕ.

Кĕрхи калчасене апат парасси — ответлă ĕç. Вăл кĕрхи калчасем пĕтессине çăлса хăварма пулăшать, юр айĕнчен имшеррĕн тухнă калчасене вăй илсе ĕрчеме пулăшать. Ку ĕçе ячĕшĕн çеç мар, агротехника хушнă пек тăвас пулать.

Иртнĕ çул тракторсемпе ялхуçалăх машинисен паркĕпе çителĕксĕр усă курнă. Кăçал тракторсемпе май пур таранах туллин усă курма тăрăшмалла. Трактор — вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçри пысăк вăй. Тракторсемпе ĕçлемелли тухăçлăха кăçал 50 процент чухлĕ ӳстермелле. Çакна пурнăçа кĕртес тесен, тракторсемпе уйхирти ĕçсене тума вăхăтра пуçăнмалла, кашни трактора йĕркеллĕ ĕçлеттермелле. Çав задачăна пурнăçа кĕртме кирлĕ условисене чылайĕшне хатĕрленĕ ĕнтĕ. Республикăри 19 машинно-тракторнăй станци апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне тракторсене пĕтĕмĕшпех юсаса çитернĕ. Чылай МТС-сем çураки ĕçĕсем валли горючи тата чурккăсем хатĕрленĕ.

Халех кашни МТС-ăн мĕнпур тракторĕсене юсаса çитермелле, тракторсене мĕнле пахалăхпа юсанине тепĕр хут тĕрĕслесе тухмалла, тракторсене ĕç вырăнĕсене илсе кайса лартмалла. Чылай МТС-сен горючисемпе чурккăсем хатĕр мар. Çак çитменлĕхе çывăх кунсенчех пĕтермелле. Тракторсем валли хатĕрленĕ чурккăсене типĕтмелле. Трактористсем хăйсем хăш хирте ĕçлемеллине малтанах пĕлсе тăччăр. Çав хирсене улăмпа хăмăлтан, çумкурăксенчен вăхăтра тасатмалла.

Тракторсене пĕр минутлăха та ĕçлемесĕр тăратмалла мар. МТС директорĕсемпе старши механиксен куçса çӳрекен мастерскойсем тăвас ĕçе большевикла ертсе пымалла. Механиксен вырăнĕ халь кабинетра мар — тракторсем патĕнче. Çамрăк трактористсемпе трактористкăсене ĕçе вĕрентсе пулăшса пырассине тĕпрен лайăхлатмалла.

Анчах, куппа пĕрлех, лашасем çинчен те манмалла мар. Пирĕн республика условийĕсенче уйхир ĕçĕсен ăнăçлăхне татса паракан тĕп вăй вăл — лаша. Лашасене çурхи ĕçсем валли хатĕрлес тĕлĕшпе хире тухиччен юлнă хĕрӳ кунсенче уйрăмах тимлĕн ĕçлемелле.

Уйхир ĕçĕсене вăхăтра пуçăнасси тата колхозсемпе бригадăсенчи, звеносенчи ĕçе тĕрĕс организацилесси вăл — колхозниксемпе трактористсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва пĕлсе организацилениччен килет. Халĕ, çурхи ĕçсен хĕрӳллĕ тапхăрĕ çитнĕ вăхăтра, ялти партипе совет организацийĕсен, коммунистсемпе комсомолецсен, агрономсемпе механиксен колхозниксемпе трактористсем хушшинче пĕр таталмасăр ĕçлес пулать. Вĕсен ĕçре хăйсем малта пырса, ыттисене те пĕтĕм вăйпа, çине тăрса ĕçлеме хавхалантарса пымалла.

Малта пыракансен опытне массăсем хушшинче сармалла. Ялти политикăллă-массăллă тата массăллă-ăнлантарулла ĕçсене хальхи вăхăт ыйтнă пек туса пырас пулать. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фронтра çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвать. Колхозниксемпе трактористсене хăйсен ĕçĕпе фронтра çĕнтерӳллĕ наступлени тума, ылханлă тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма пулăшма çĕклемелле.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешме Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилес ĕçре районри хаçатсемпе стена хаçачĕсем тата радио умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен çуракине кăтартуллăн ирттерессишĕн пыракан социализмлă ăмăрту çинчен куллен çутатса тăмалла, партипе совет тата комсомол организацийĕсене социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыма, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине кăтартуллăн ирттерме, мĕнпур тырăсен тухăçлăхне вăйлăн ӳстерме пулăшмалла.

60 пăт утă пачĕ

КУВАКИНО. Суворов ячĕпе тăракан колхозри колхозница Е. С. Луконина, колхозăн выльăх-чĕрлĕх апачĕ çителĕксĕррине курса, хăйсен колхозне 60 пăт утă кивсен панă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 20-мĕшĕнче НАРВА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри плацдармра пирĕн çарсем тăшманăн йышлă пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă. Çапăçусенче нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

ТАРНОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем пĕр вырăнта малалла тапăнса пынă, тăшмана темиçе ялтан хăваласа кăларнă, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă.

СТАНИСЛАВ хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманăн йышлă пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 29 танкне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 65 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ РЕЗЕКНЕ, ГУЛБЕНЕ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАТА КИВИЫЛИ СТАНЦИЙĔНЧИ СЛАНЕЦ ЗАВОДНЕ ТАПĂННИ

Апрелĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух, çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Резекне чугун çул узелне тата Гулбене чугун çул узелне (Латви ССР-ĕ) тапăннă, тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула пушарсем нумай тухнă, цушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çак каçах пирĕн самолетсем Кивиыли станцийĕнчи (Эстони ССР-ĕ) сланец заводĕ çине бомбăсем пăрахнă. Пилĕк тĕлте вăйлă пушарсем тухнă, çав пушарсем заводăн пĕтĕм территорине тенĕ пекех ярса илнĕ.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

* * *

ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН КАРАПĔСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Хура тинĕс флочĕ Севастопольпе Румыни прочĕсем хушшинче тăшман карапĕсене тăтăшах пыра-пыра çапать.

Апрелĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле совет бомбардировщикĕсемпе торпедоносецĕсем тăшман судниесен икĕ караванне атакăланă, 3.000 тонна таякан транспорта тата 2.000 тонна таякан транспорта шыва путарнă.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла пирĕн летчиксем тинĕсре тăшман судниесен тата икĕ караванне курнă та атакăланă. Пĕр караванри 5.000 тонна таякан транспорта шыва путарнă. Тăшман судниесен тепĕр караванне совет летчикĕсем тăватă хут умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапнă. Бомба тӳрĕ пырса лекнипе 5.000 тонна таякан транспорт çунма пуçланă, малалла каяйми пулса тăнă. Çакăн хыççăн пирĕн самолетсем ăна пыра-пыра çапса, шыва путарнă. Тăшманăн пĕр миноносецне те путарнă. Тăшманăн 3 транспортне тата ытти вакăрах судниесене чылай вăйлă сиенленĕ.

* * *

Нарва хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем пирĕн Нарва шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдарм йышăнса тăракан çарсене атакăланă. Атака тăвас умĕн артиллери вăйлăн персе тăнă. Тăшманăн темиçе вунă артиллери батарейи совет позицийĕсене сехет çурă хушши персе тăнă. Çакăн хыççăн нимĕç пехотин шултăра вăйĕсем, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем пулăшса пынипе, атака пуçласа янă. Гитлеровецсем пирĕн оборонăна пĕрре пырса çапсах аркатма шутланă пулмалла, анчах та йăнăшнă. Совет боецĕсем нимĕçсен атакăлакан колоннисене лашасемпе, пулеметсемпе, миномётсемпе тата артиллерипе тĕл персе тăрса, каялла чакарнă. Кун каçиччен пирĕн чаçсем тĕрлĕ участокра тăшманăн йышлă атакисене сире-сире янă, вĕсем хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Тăшман çынсемпе техникăпа тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем тӳснĕ.

Совет зенитчикĕсем, нимĕç авиацийĕн атакисене сирсе тăрса, тăшманăн пикировка тăвакан 10 бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн Чубуков капитан ертсе пыракан истребительсем çĕр çинчи çарсене хӳтĕлесе пынă чухне сывлăшра тăшман бомбардировщикĕсемпе истребителĕсен пĕр ушкăнне тĕл пулнă. Совет летчикĕсем çапăçса, нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Тарнополь хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшмана темиçе ялтан хĕссе кăларнă. Пирĕн боецсем 15 тупă, 32 пулемет, 800 винтовкăпа автомат тата снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Çапăçура нимĕç пехотине пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Станислав хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманăн йышлă вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Нимĕçсен танкĕсемпе пехоти пирĕн позицисене икĕ енчен пырса тăтăшах хĕснĕ. Кун каçах вăйлă çапăçусем пынă. Совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем тата артиллеристсем гитлеровецсене вĕлерсе пынă, вĕсене каялла хăвала-хăвала янă. Пĕр чаçăн боецĕсем пĕр участокра кăна нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 10 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр районра пирĕн çарсем тăракан вырăна кĕрсе кайнă гитлеровецсен батальонне çавăрса илнĕ те пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Гварди майорĕ Михайленко ертсе пыракан летчик-штурмовиксен ушкăнĕ пĕр чугун çул станцине атакăланă. Çав станцире нимĕç çарĕсене тиенĕ икĕ эшелон тата вагонсем нумай пулнă, боеприпассем нумай шаршанланса выртнă. Хĕвел енчен вĕçсе пырса, пирĕн летчиксем тăшман сисмен вăхăтра сасартăк станци патне пырса тухнă. Нимĕçсем, сывлăшран тапăнасса кĕтменскерсем, зенитнăй тупăсемпе пеме те пуçлайман. Бомбăсем пăрахнипе пула тата тупăсемпе, пулеметсемпе пенипе пула, нумай вагона вут хыпса илнĕ, боеприпассем сирпĕнме пуçланă. Часах пĕтĕм чугун çул станцине вут çулăм хыпса илнĕ. Пирĕн самолетсем пĕр сухатусăрах хăйсен аэродромне таврăннă.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен Украина партизанĕсен темиçе отрячĕ виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 7 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă тата 600 метр тăршшĕ чугун çула пăснă. Тăшманăн çул юсакан командисем вагонсен ванчăкĕсем айĕнчен 200 гитлеровецăн виллине ытла туртса кăларнă.

* * *

Аяларах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Каменец-Подольск облаçĕнчи Подлесцы ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсем пирĕн яла оккупацилленĕренпе вĕсем пирĕн ял çыннисене питĕ хĕстерчĕç, калама çук мăшкăлларĕç. Гитлеровецсем пĕр çемьене те пĕр çынна та тивмесĕр хăвармарĕç. Вĕсем пурăнмалли çуртсемпе хуçалăх хуралтисене пурне те илсе тăкрĕç, мĕн пуррине пурне те çĕмĕрчĕç, тустарчĕç. Хăйсем каялла чакас умĕн нимĕçсем пирĕн ялти çынсене Германие каторгăна ăсатма Четырбоки станцине хăваласа кайрĕç. Кайма хатĕрленме 15—20 минут çеç пачĕç. Гитлеровецсем çуртсене пăхса çӳренĕ чухне чирлĕ колхозниксемпе стариксене пере-пере вĕлерчĕç. Нимĕçсем пĕтĕм округран темиçе пин совет гражданне хураласа пырса çав станцине пухрĕç те вĕсене вагонсене хăваласа кĕртрĕç. Совет çарĕсем çав станци патне çывхарма пуçласан, нимĕçсем чирлĕ çынсене калама çук хаяррăн тыткаларĕç. Совет çыннисене турттарса кайакан икĕ эшелона гитлеровецсем ӳпĕнтерсе ячĕç, икĕ эшелона бензин сапса çунтарса ячĕç. Ытти эшелонсене нимĕçсем пĕтерме пултараймарĕç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем совет гражданĕсене чыхса тултарнă 90 вагона тытса илчĕç. Темиçе пин колхозник ирĕке тухрĕç, хăйсен тăван ялĕсене таврăнчĕç».

Акт çине çак учительсем алă пуснă: Андрей Сташенин, Мефодий Зубачок, Анна Козачук тата Григорий Тихолюк.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Малта пыракан бригадăсем

КУСЛАВККА, апрелĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинат коллективĕ май уявĕ умĕнхи ăмăртури обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Вăл уйăхри задание апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçлать. Шутов, Хитин, Бродский юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсен коллективĕсем уйрăмах тухăçлăн ĕçлеççĕ. Виндорчик юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади комбинатăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Ку фронтовой бригадăри çамрăксем ĕç нормине тăтăшах икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Çавăн пекех май уявĕ умĕнхи ăмăртура Худяков юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада та паха тĕслĕхсем кăтартать.

Комбинат коллективĕ уйăхри задание пур тĕрлĕ продукци енĕпе те ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешет.

Н. ПЕТРУЧЕНКО,
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Хатĕрлӳ ĕçĕнчи ăмăрту

КАНАШ. Заготживсырье контори (управляющийĕ Тигелев юлташ) кăçалхи 1-мĕш кварталта чĕрĕ тирсем пухмалли задание 155 процент пурнăçларĕ. Хатĕрлӳ ĕçĕнче уйрăмах Игнатьев, Бахмутов агентсем тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Вĕсене хатĕрлӳ ĕçĕнче кăтартуллăн ĕçленĕшĕн «Отличный заготовитель» значек панă.

Иртнĕ çулта çак коллектив Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура виççĕмĕш премие илнĕ. Ăмăртура уйрăмах палăрнă работникĕсене премилеме 16 пин тенкĕ укçа панă.

Кунти агентсем, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, аслă уяв тĕлне иккĕмĕш кварталти плана пурнăçлама сăмах пачĕç.

(Хамăр корр.).

Промысла кооперацин артелĕсен ĕçне лайăхлатар

Аслă Отечественнăй вăрçă промысла кооперацин артелĕсем умне те пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăрçăччен промысла кооперацин артелĕсем çĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем ытларах кăларса тăрас тĕлĕшпе çеç ĕçленĕ пулсан, вĕсем халĕ фронт заказĕсене те пурнăçлаççĕ.

Республикăри промысла артелĕсем вăрçă вăхăтĕнче продукци туса кăларассине, вăрçăченхи вăхăтпа танлаштарсан, икĕ-виçĕ хут ӳстерчĕç. Фронт заказĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пынипе пĕрлех, ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине те ӳстерсе пыраççĕ.

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри промысла кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Сĕнтĕрвăрринчи «Лесоруб» артель ăмăртура мала тухнă. Вăл март уйăхĕнче пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 220 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 249,3 процент пурнăçланă. Февраль уйăхĕпе танлаштарсан, пĕтĕм продукци туса кăларассине 60,2 пин тенкĕлĕх ӳстернĕ. Карачъялĕнчи «Труд» артель (Октябрьски район) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 142,5 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 170 процент тăрăх пурнăçланă. Асăннă артельсем чăнласах та вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеççĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри промысла кооперацин артелĕсем хăйсен умĕнчи задачисене кирлĕ пек пурнăçласа пыраймаççĕ-ха. 1944 çулхи пĕрремĕш кварталта промысла кооперацин артелĕсем пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 89,1 процент кăна пурнăçланă. Пурнăçран ытларах артельсенче плана пур йышши продукцисем енĕпе пурнăçласси кăчăр пулса пырать. План тăрăх 72 тĕслĕ продукци туса кăлармалла пулсан, артельсем плана виçĕ тĕслĕ продукци енĕпе çеç пурнăçланă.

Шупашкарти «Красный мебельщик», Канашри «1-ое мая», Кувакинăри «18 лет Октября» артельсем уйрăмăнах начар ĕçлесе пынине палăртмалла. Çак артельсен руководителĕсем хăйсен ĕçĕнче ответлăх туймаççĕ. Тĕслĕхрен, Канашри «1-ое мая» артель (председателĕ Новиков) икĕ çул ĕнтĕ уйăхри заданисене пурнăçласа пымасть. Артельте чылайĕшĕ ĕç нормине тултарса пыраймаççĕ. Цехсенче агитаципле-ăнлантарулла ĕçе вăхăтран вăхăта çеç туса пыраççĕ. Социализмлă ăмăрту ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăмасть.

Уйрăмăнах древпромсоюз, промсоюз системине кĕрекен артельсем плана тултарса пыраймаççĕ. Асăннă системăсенчи союз председателĕсем артельсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. Чăвашпромсоюз (председателĕ Титов) артельсенчи кирек-мĕнле ĕçсене вырăна кайса тĕрĕслесе, кирлĕ пек мерăсем йышăнма шутламасть. Çавăн пекех хăшпĕр районсенчи ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем те артельсен ĕçĕсемпе сахал интересленеççĕ. Çавна пула та ĕнтĕ артельсен ĕçĕнче тĕрлĕ чăрмавсем сиксе тухаççĕ.

Халĕ республикăри пур предприятисемпе учрежденисем те май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Пахалăх, промысла артелĕсен коллективĕсем те аслă уява чаплă çитĕнӳсемпе кĕтсе илмелле. Май уявĕ тĕлне пур артельсем те уйăхри задание ăнăçлăн тултарма тивĕçлĕ.

Хамăрăн пĕтĕм ресурссене мобилизацилесе, хамăрăн шалти майсемпе пĕтĕмпех усă курса, продукци туса кăларассине ӳстерсе пырар.

С. ФЕДОРОВ.

Пирĕн земляксем

Вăл Ленинграда хӳтĕленĕ

Ытти совет çамрăкĕсенни пекех, Гурий Ефимович Ефимовăн пĕр шухăшĕмĕт пулнă: вăтам шкултан вĕренсе тухсан, институтра вĕренме кĕмелле, Тăван çĕршыва усăллă çын пулмалла. Çак вăр-

çă пулмăн пулсан, тен, вăл паян та институтăн аслă аудиторийĕнче лекци итлесе ларнă пулĕччĕ е наука кабинетĕнче опытсем тунă пулĕччĕ. 19 çулхи Гурий Ефимов, Тăван çĕршыв умне хăрушлăх килсе тухсанах, хăйĕн граждăнла тивĕçне пурнăçа кĕртме фронта тухса каять.

Ăна Ленинград хулине хӳтĕлеме янă. Малтан вăл кĕçĕн командирсен курсĕнче вĕренет, ун хыççăн фронтăн малти позицине каять.

...1943-мĕш çулăн пуçламĕшĕ. Эрнипе эрнипе шартлама сивĕ кунсем тăнă. Сурчăк та юр çине ӳкиччен шăнса ларать. Е тата çил-тăман тухать те чарăнассăн туйăнмасть. Тискер тăшман Ленинграда ункăласа илнĕ, вăл ăна хăвартрах парăнтарасшăн çуннă. Паттăр хула, хастар воин пек, нимĕçе парăнман. Ленинградецсем пинпĕрĕн хăйсен тăван хулине чыслăн хӳтĕленĕ, кашниех хăйĕн тăван хулишĕн чунне пама та хатĕр тăнă.

Çав хăрушă кунсенче Гурий Ефимов Ленинград çывăхĕнче кĕрешет. Сăнамалли пунктра ларса, вăл хамăрăн орудисен расчечĕсене тăшман çинчен вăхăтра пĕлтерсе тăрать. Пĕррехинче совет çарĕсем вырнаçнă пункт çине тăшман пирĕннисенчен 4 хут йышлăрах вăйпа тапăнса килнĕ. Вĕсене Гурий Ефимов аван курса тăнă. Вăл тăшман мĕнле вăйпа тапăнса килнине вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Ун çинчен вăл çывăхри оруди расчечĕсене пĕлтерет.

Сывхаракан тăшмана совет çарĕсем лайăх кĕтсе илнĕ. Вĕсем кĕске вăхăтрах тăшманăн пысăк вăйне аркатса тăкаççĕ, 300 салтакĕпе офицерне ĕмĕрлĕхех «леш тĕнчене» ăсатаççĕ, хăйсем наступление куçаççĕ.

— Сирĕн паттăрла ĕçĕр пире çавăнтарать, — теççĕ командирсем, Ефимовăн ĕçне хакласа.

Каярахпа Гурий Ефимов пĕр станцăна нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă çĕрте çапăçать. Хăюллă воин нимĕçсем вĕçĕмсĕр персе тăнă вăхăтрах — çыхăнăва тĕрĕс йĕркелесе пырать. Пĕр талăк хушшинче кăна вăл, çил-тăвăллă тăшман персе тăниччен хăрамасăрах, командăнăй пунктпа наблюдательнăй пункт хушшинчи çыхăнăва 15 хутчен кайса сыпать. Çак ĕçе тума ăна тăшман пульли те, вĕçĕмсĕр тустарса тăракан çавраçиллĕ шартлама сапталăк та, каçхи тĕттĕм те чăрмантараймаççĕ.

— Кам каять çыхăнăва сыпма! — тесе ыйтсанах:

— Никама та мар, мана ярăр! — ыйтать Ефимов.

Пĕррэ çыхăнăва сыпма унпа пĕрле Ленинград çынни Порфирьев пынă.

Вĕсем вĕçтерекен юр хӳттипе, çĕр çумĕпе малалла шунă. Çумра, телефон аппарачĕсемсĕр пуçне, çыхăнăва юсамалли инструментсем, кабельсем, автомат пулнă.

Сасартăк, вĕсенчен инçех те мар, миномётран пени янраса кайнă, çумран пĕр пуля хыççăн тепри янраса иртнĕ. Çак самантрах Ефимовăн пуçĕ шавласа кайнă, вăл çĕре ӳкнĕ, пуçне аллипе тытнă. Нумайччен выртсан тин хăйне тăшман пульли амантнине туйса илнĕ вăл.

Гурий Ефимов йывăр аманнă пулин те çыхăнăва вăхăтра ĕçлеме пуçланă, ăна унăн юлташĕ кайса сыпнă. Çав кунах вара Хĕрлĕ Çар воинĕсем, атакăна тухса, халăх пурăнакан чылай пунктсене ирĕке кăларнă.

Чăваш халăхĕн хастар ывăлĕ старши сержант Гурий Ефимов — Ленинград хулине хӳтĕленĕ паттăр воинсенчен пĕри, вăл Ленинград блокадине татса тухас тĕлĕшпе паттăрлăхпа хăюллăх кăтартнă. Çакăншăн ăна «За Оборону Ленинграда» тата «За отвагу» медальсемпе наградăланă.

Х. ЛИСИН.

Тăпрари нӳрлĕхшĕн кĕрешни—тухăçлă тырпулшăн кĕрешниех

Агротехника правилисене çуракин малтанхи кунĕсенчен пуçласах тĕплĕн пурнăçлар!

Ӳкерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи «Хунав» колхоз председателĕ **А. А. Казначеев** юлташ (сулахайра) тата çав колхозăн бригадирĕ **П. К. Мясников** юлташ. «Хунав» колхоз çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленсе тухнă. Кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн Крупская ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

17 колхоз çураки ĕçĕсене пуçăнчĕç

ЕЛЧĔК. Апрелĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри кашни колхозрах ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн сӳтсе-явассĕ. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ янă агитаторсем ĕçлессĕ.

Районри 17 колхоз çураки ĕçĕсене пуçăнчĕç. Чăн малтанах «Комбайн», «Журавлевка», Ворошилов тата Горький ячĕпе тăракан колхозсем хирĕ тухрĕç. Вăл колхозсенче вăрлăх участокĕсене уйăрнă, вĕсен çумне уйрăм звенсене çирĕплетнĕ. Паянхи куна: 2.999 центнер тырра яровизацилеме хунă, 104 гектар çинче клевер акнă. Çурхи тырăсем акмалли 87 гектар сухаласа хатĕрленĕ. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрсене 48 гектар культиваци тунă.

Кĕрхи çĕртме тунă лаптăксене, нӳрлĕхе ытларах тытса хăварас тесе, малтан сӳрелессĕ. «Комбайн» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çурхи тырăсене акма тытăнчĕç, апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне районĕпе 45 гектар тулă, 34 гектар çине сĕлĕ акнă. Çураки ĕçĕнче пур колхозсенче те агротехника правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырассĕ. Кашни участокра уйрăм плугсемпе ĕçлесе, сдельщинăна пурнăçласа пырассĕ. Çакăн пек ĕçлессине ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçлениччен туса пырасса шанма пулать.

Паян уйрăм колхозсенче Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене, агрономсене чĕнсе каланине сӳтсе явма тытăнчĕç. Колхозсене районри партипе совет активне яратпăр.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Клевер акма тытăнчĕç

КӲКЕÇ, апрелĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри уйрăм колхозсем клевер акма пуçăнчĕç. «Победа» колхоз 10 гектар, «11 лет Октября» колхоз 10 гектар акнă. Çавăн пекех, «Новый быт», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те клевер акассĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе 57 гектар акнă.

Г. ПЕТРОВ.

Республикăри колхозсем çуракине пуçăнаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, апрелĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 21 колхозра пурĕ 600 центнер çĕрулми яровизацилеме хунă. Кашни колхозрах яровизацилес ĕçе пĕлекен ответлă çынсене уйăрнă.

«Осоавиахим», «Красная звезда», «Шордан» Буденный ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те клевер акма тытăнчĕç. Апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ 130 гектар акнă.

Районри колхозсем вăрлăх çитмен колхозсем валли 1458 пăт тĕштырă пухнă.

Гектартан 100-шер пăт тырă илессишĕн

СОВЕТСКОЕ. («Чăваш Коммуни корр.). Чемейри «Сеятель» колхоз çуракине хатĕрленме кĕркуннех тытăннă.

Мĕнле хатĕрленнĕ-ха чемейсем çуракине? Вĕсем чи малтанах вăрлăх фондне ситевĕклĕ уйăрса хунă. Хальхи вăхăтра колхозăн пур йышши вăрлăх та ситевĕклĕ таранах пур. Вĕсем сортлă, вĕсене лайăх тасатнă. Сĕлĕпе тулăна малтан веялкăна 2 хут сăвăрнă, унтан триер витĕр кăларнă. Пăрçана вара алăпа суйланă. Тулă 95 процент, пăрçа 93 процент, сĕлĕ 92 процент шăтать. Вăрлăхсене мĕнле упраса усранине асăрхасах тăраççĕ.

Колхоз пусусăврăнăш йĕркине çирĕп тытса пырать. Пусусăврăнăшĕ вĕсен 7 уйлă. Клеверпа люцернăна кашни çулах акаççĕ. Кăçал, сăмахран, клевера 34 гектар çинче акаççĕ. Вăрлăхне хăйсемех хатĕрленĕ. Сăмах майĕн каласан, чемейсем çулсерен гектартан 3,5—4-шар центнер клевер вăрри туса илеççĕ.

Производство планне тунă. Ăна колхозниксен пухăвĕнче тата райсĕрĕç панĕнче çирĕплетнĕ. План тăрăх, çуракине 8 кунра вĕçлемелле. Çуртырмисене пĕтĕмпех машинăсемпе акса хăвармалла. Сеялкăсем çитеççĕ: икĕ бригадăна — висĕ сеялка. Акакансене те уйăрнă. Вĕсем хăш лашапа ăçта ĕçлемеллине тата куллен мĕн чухлĕ сухаламаллине пĕлеççĕ. Плугсемпе сӳресем юсавлă, çĕмĕрĕлсен-тусан кӳлме запасра пур. Сӳре пăявĕсене çĕнĕрен явнă.

Колхозри бригадăсене звеносем çине пайланă. Кашни бригадăра — виçшер звено. Çав шутра тĕштырăсем туса илес тĕлĕшпе 3 звено, кантăр, клевер тата çĕрулми туса илес тĕлĕшпе пĕрер звено пулаççĕ. Хăш звено ăçта мĕнле культура туса илмеллине лайăх пĕлет.

Тырпул тухăçлăхĕ çĕре çемçетнинчен нумай килет. «Сеятель» колхоз членĕсем вырăнти удобренисене нумай хатĕрленĕ. Кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне планпа палăртнинчен ирттерсе пухнă. Уя 3204 лав тислĕк кăларнă. Ăна лайăх купаласа хунă. Тислĕке 4-мĕш уя — кĕрхи тырăсем акмалли çĕре тăкнă. Кĕлпе тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе пахча-çимĕçсем туса илмелли вырăнсене çемçетеççĕ. Кантăр ани çине сапма виçĕ тонна (кали тăварĕ) пур. Унпа кĕртырмисене 15 гектар çинче, çуртырмисене 20 гектар çинче апат пама йышăннă.

Колхозăн ака-суха ĕçĕсене 82,5 гектар çинче тумалла. Кашни лаша пуçне вăтам шутпа 4 гектар тивет. Кунта турттăм вăйне кирлĕ пек хатĕрлеççĕ. Лашасене кантарма тăратнă, лайăх тăрантараççĕ. Талăкне 2 хут пăтратса çитереççĕ, кăнтăрла утă пăраççĕ. Пăтратни çине кашни лаша пуçне пĕрер килограмм çăнăх сапаççĕ. Çураки вăхăтĕнче валли утăпа сĕлĕ кирлĕ чухлех хатĕрлесе хунă.

Иртнĕ çулта 10 тиха вырăнне 14 тиха пăхса ӳстернĕ. Лаша чирлени, кĕсре хăм пăрахни, тиха вилни кунта халиччен пулман.

Транспорт инвентарĕсемпе ут таврашсем ытлашшипех. Кашни лашан — хăйне юрăхлă кӳлмелли хатĕр пур. Хăмăтсемпе ĕнерчĕксене çĕнĕ те çемçе кĕççе хунă. Лашасене ездовойсем çумне çирĕплетсе панă. Кашни колхозник—хăйне çирĕплетсе панă лашашăн ответлă.

Колхозра туртăм вăйĕ çителĕклĕ пулин те, 4 вăкăра кӳлме вĕрентнĕ. Вăкăрсемпе фермăсем çумĕнчи участока (икĕ гектар çурă) ĕçлеме шутлаççĕ. Унта клеверпа люцерна акаççĕ.

Чемейсем вăйлă тырпул туса илме ăста. Вĕсен ку тĕлĕшпе пуян опыт пур. Иртнĕ çулта вĕсем кашни гектартан 15 центнер тĕштырă туса илнĕ. Кăçал 17-шер центнер тырă туса илме шутлаççĕ.

Колхозри актив—пысăк вăй

ВĂРНАР. Хаçăсри «Советская деревня» колхозăн членĕсем кăçал хăйсен умне гектартан 15 центнертан кая мар тĕштырă туса илес тĕллеве лартрĕç. Çак задачăна пурнăçласси, чăн малтанах, çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе ирттернинчен килет.

Колхоз акана тухма хатĕр. Ялхуçалăх инвентарьне — 27 плуг, 29 сӳре, 4 сеялка — лайăх юсанă, çуракинче ĕçлемелли 40 лаша валли 70 урапа тата ут таврашĕсем 56 комплект хатĕрленĕ.

Кăçал колхозăн уйхирне колхозниксем хĕл кунĕсенчех 7785 лав тислĕк, 40 лав фекали кăларнă. 684 пăт кĕл, 516 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, пур культурăсем тăрăх та вăрлăхсем хатĕрленĕ тата вĕсене кондицине ситернĕ.

Çак ĕçсене тунă çĕрте ялти актив — коммунистсемпе комсомолецсем тата учительсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем, чăн малтанах, ĕçре хăйсем пример кăтартса пычĕç, çав вăхăтрах ытти колхозниксен хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилерĕç.

Агитаторсем яланах колхозниксем хушшинче. Кам пĕлмест ака Черновăпа Дубровина тата Ежовăпа Корнеев учительсене? Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă бригадăсенче çеç мар, колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче те час-часах докладсем тăваççĕ, колхозниксене усăллă канашсем параççĕ. Комсомолăн пуçламĕш организацин секретарĕ Надеждина юлташ, колхозри «Ударник» ятлă стена хаçатне вăхăтра кăларать, хаçат тавра колхозниксен анлă массине организацилет.

Иртнĕ çулсенче кайра пынă «Советская деревня» колхоз членĕсем кăçал хăйсен колхозне чăннипех çирĕп ура çине тăратма, районра малта пыракансен ретне кăларма ĕмĕтленеççĕ. Çав шутпа вĕсем юнашарти Чапаев ячĕпе тăракан колхоза ăмăртăва чĕнчĕç.

Х. ЛИСИН.

колхозсен вăрлăх фондне

ÇАК КОЛХОЗНИКСЕМ — ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ÇУЛĂМЛĂ ПАТРИОЧĔСЕМ — ХĂЙСЕН ЗАПАСĔНЧЕН ХЫВНĂ:

И. ДУБАНОВ — Вăрнар районĕнчи, Янгорчинăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ — 36 пăт тырă.

К. АНТОНОВА—Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ — 36 пăт тырă.

Ф. ПАЙМАНОВ — Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозăн председателĕ —36 пăт тырă.

Д. ЕРМОЛАЕВА — çав колхозри трактористка—35 пăт тырă.

Н. ПАЙМАНОВ — Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз членĕ—30 пăт тырă.

С. ВОЛКОВ — çав колхоз членĕ—30 пăт тырă.

Д. ГРИГОРЬЕВ — Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ —25 пăт тырă.

И. ВОЛКОВ — Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозăн бригадирĕ—24 пăт тырă.

К. ГРЕНАДЕРОВА — çав колхозри колхозница—18 пăт тырă.

БЫКОВ — Элĕк районĕнчи «Труд» колхоз председателĕ 15—пăт тырă.

Ф. ИЛЬИН — Чурачăк районĕнчи 1-мĕш Вăрманкас ялсовет исполкомĕн председателĕ — 12 пăт тырă.

Г. ПЕТРОВ—Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ — 12 пăт тырă.

К. СПИРИДОНОВ — Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз членĕ—12 пăт тырă.

А. ГРИГОРЬЕВА — çав колхозри колхозница — 12 пăт тырă.

Е. ДМИТРИЕВ—çав колхоз членĕ—12 пăт тырă.

И. ФИЛИППОВ — Çĕрпӳ районĕнчи. Кăшаркассинчи «Пионер» колхоз членĕ—12 пăт тырă.

Ф. ДАНИЛОВА — çав районри «Пионер» колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕ —9 пăт тырă.

ГАВРИЛОВ — Элĕк районĕнчи, Самушкăри колхозăн счетовочĕ—6 пăт тырă.

Вăрлăха салатаççĕ

КАНАШ. Йăлмачари «1-е мая» колхозăн вăрлăхлăх тырă çителĕклĕ пулмалпирки, кӳршĕри колхозсем ăна вăрлăх илсе пырсах пачĕç. Анчах та çак вăрлăха çуракиччен çĕр процентчĕпех сыхласа хăварассишĕн колхоз руководителĕсем тăрăшмаççĕ. Колхоз председателĕ Н. Петров юлташ вăрлăхлăх тырра салатма тытăннă: хăйне 12 пăт илнĕ, заместительне—Скворцова—6 пăт панă. Çапла майпа вăрлăхлăх тырăран пурĕ 400 килограмм тĕрлĕ çĕре салатса пĕтернĕ.

Йăлмачча колхозĕ кăçал çуракине ытла та япăх хатĕрленнĕ. Лашасем, чунсăр пăхнипе, чылайĕшĕ вилнĕ. Апла пулсан та фермăри вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене пĕрне те ĕçе вĕрентмен. Колхозăн юр айĕнчен тухакан улăмне колхоз председателĕ Петров кӳршĕри яла 6 килограмм çулла сутнă. Ку колхозра районран килекен представительсем те нумай пулаççĕ, анчах Петровăн преступленилле ĕçĕсене курмассĕ.

Т. ТУРХАН.

Ют çĕршывсенче

Турци правительстви Румынин икĕ пароходне тытса чарма йышăннă

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Турци правительстви Стамбулра Румынин икĕ пароходне — «Трансильвания» тата «Бессарабия» ятлă пароходсене—тытса чарма йышăннă. Çав пароходсем кашниĕ 7.000-шер тонна таяççĕ. Вĕсем Хура тинĕсе кайма хатĕрленнĕ пулнă. Çав пароходсемпе малтан пассажирсене тата таварсем турттарса çӳренĕ, вĕсем Стамбула пассажирсемпе таварсем тиеме пынă та.

Турци правительстви çав пароходсемпе вăрçă хатĕрĕсем турттарма шут тытни çинчен пĕлсен, çав пароходсем тĕлĕшпе пулăшуллă суднăсене проливсем урлă кайма чаракан килĕшĕвĕн (Монтре хулинче туиăскерĕн) правилисене пурнăçа кĕртнĕ. Çав пароходсем çинче халĕ Турци хуралĕ тăрать. Пароходсем тарма ан пултарччăр тесе, вĕсен машинисене сӳтсе илнĕ.

ТУРЦИ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЕ ХРОМ ПАМА ПĂРАХАТЬ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Анкарара официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа Турци ют çĕршывсене хром пама пăрахать, тенĕ.

АНГЛИРЕ ЮТ ÇĔРШЫВ ДИПЛОМАЧĔСЕН ПРАВИСЕНЕ ЧАКАРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат çапла пĕлтерет: дипломатсен телеграммисемпе çырăвĕсене цензура пăхса тухмалла тунă хыççăн, Англи правительстви тата дипломатсем Англи тăрăх çӳрессине те чакарма йышăннă. Çĕнĕ распоряжени тăрăх, правительство дипломатсене уйрăм вăрçă зонисене кайма чарма пултарать; ют çĕршыв дипломачĕсене çĕрлехи вăхăтра çӳреме ирĕк паракан правилăсене те, çавăн пекех тата дипломатсене ытти енĕпе те ытларах право панине, вăхăтлăха пăрахăçа кăларнă.

ЭЙРЕПЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕМ ХУШШИНЧЕ СЫВЛĂШ ТĂРĂХ ПОЧТА ÇӲРЕТМЕ ЧАРНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эйрен почтăпа телеграф министерстви Эйрепе ютçĕршывсем хушшинче сывлăш тăрăх почта çӳретме чарса лартни çинчен пĕлтернĕ. Дублинра çапла пĕлтернĕ: Кăнтăр Ирландипе Англи хушшинче пароходсем çӳреме пăрахаççĕ, тенĕ. Дублинпа Англи хушшинче питĕ кирлĕ çыхăну çеç юлать.

США-н ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕН ПАЛАТИ ХĔÇПĂШАЛА КИВÇЕН Е АРЕНДА ЙĔРКИПЕ ПАМАЛЛИ ЗАКОНĂН СРОКНЕ ТĂСМА ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер США-н представителĕсен палати хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх тĕрлĕ килĕшӳсем тума президента панă полномочин срокне июнĕн 30-мĕшĕ иртсен тата тепĕр çуллăха тăсма йышăннă; çак решенишĕн 334 сасă, ăна хирĕç 21 сасă панă. Халĕ çав законопроекта сената янă. Законопроектра çĕнĕ статья пур. Çав статья тăрăх, вăрçă хыççăн «ют çĕршывсемпе сыхăнас» тĕлĕшпе президент панă обязательствăсене кирек хăшне та конгресс тепĕр хут пăхса тухма пултарать.

АНГЛИПЕ АМЕРИКĂН НЕФТЬ ЫЙТĂВĔПЕ ПУХНĂ КОНФЕРЕНЦИЙĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Вашингтонра Англипе Америкăн вăрçă хыççăнхи нефть ыйтăвĕсене сӳтсе-явма малтанлăха пухнă конференцийĕ ĕçлеме пуçланă.

ИСПАНИПЕ ПОРТУГАЛИ ГЕРМАНИЕ ВОЛЬФРАМ ЯРСА ТАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Испанипе Португалирен вольфрам ытларах тата хăвăртрах илесчĕ тесе çав тери хытă тăрăшаççĕ. Сурçĕр Португалири пĕр рудникран вольфрам рудине самолетсемпе турттараççĕ.

Португалипе Испани чикки сывăхĕнчи тепĕр рудникран вольфрама нимĕçсем усă куракан темиçе çĕр хĕрарăмпа çамрăк ачасем Испани чикки урлă вăрттăн касарса параççĕ. Руда тиенĕ лашасем тăтăшах тусем урлă каçаççĕ. Вольфрам рудине çавăн пек вăрттăн турттарнине Испани влаçĕсем пĕлеççех.

ГЕРМАНИРЕ «СУЯ ХЫПАРСЕМ САРАКАНСЕМПЕ» КĔРЕШНИ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсен «Хемницер цейтунг» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хемницра гитлеровецсем гостиницăсемпе ресторансен хуçисемпе работникĕсене пухнă. Çав пухура власть представителĕ çапла каланă: Германире халăх хушшинче пур вырăнсем те тĕрлĕ «усал хыпарсем» саракан вырăнсем пулса тăчĕç, тенĕ. Гитлеровец пухури çынсене çапла асăрхаттарнă: сирĕн «суя хыпарсем саракансем çинчен» пурин çинчен те çийĕнчех полицие пĕлтерес пулать, унсăрăн сире питĕ хытă айăплĕç, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине Америка бомбардировщикĕсем Па-де-Кале районĕнче тăшманăн çар объекчĕсене тапăннă.

Америка авиацийĕн пысăк соединенийĕсем ĕнер иккĕмĕш кун Германие тапăннă. Тăшман хытах хирĕç тăман. Бомбăсем авиаци завочĕсемпе ангарсене нумай лекни паллă пулнă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 21 самолетне персе ӳкернĕ.

Америка авиацийĕ ĕнер тата Сурçĕр Францири çар объекчĕсене, унтан Малинри (Бельги) чугун çулсене тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи самолечĕсен пысăках мар соединенийĕ апрелĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Болгарин Пловдив чугун çул узелне тапăннă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтсенче патрульсемпе артиллери кĕрешнĕ.

Авиаци тăшманăн Италири çар объекчĕсене тата Югославири Меткович районĕнчи чугун çул сооруженийĕсене пыра-пыра тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН БАЛКАНРИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Италире вырнаçнă самолетсем юлашки вăхăтра Дунай шывне минăсем пăрахас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çав ĕçе тунă вăхăтра нимĕçсен сахалтан та 30 суднине путарнă е вăйлă сиенленĕ. Бомбардировщиксем, аялтан вĕçсе пырса, тăшманăн Дунай шывĕ çинчи флотне пулеметсемпе пенĕ. Çав флот вăл гитлерла çарсем валли çар хатĕрĕсем турттарать. Тăшман авиацийĕ курăнман. Дунай шывĕ хĕрринче ларакан хуласенчи зенитнăй артиллери сахал пенĕ. Будапештри тата Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, Дунай шывне минăсем пăрахнă пирки пароходсене апрелĕн 17-мĕшĕнче Дунай тăрăх çӳреме чарнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Сербире кĕрешекен 5-мĕш дивизийĕн чаçĕсем Студеница шывĕ çинче Болгари оккупанчĕсене аркатса тăкнă та вĕсене Ибар шывĕ патне хăваласа янă. Гитлеровецсемпе недичевсем тата Болгари чаçĕсем фронтăн Иванница-Рашка участокне çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ.

Санджакпа Черногорире гитлеровецсемпе четниксем тата недичевсем авиаци пулăшнипе наступлени туса пыраççĕ. Унта ытла та хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Хĕвелтухăç Боснире ĕлĕкхи пекех вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Югославири фронтăн ытти участокĕсенче çапăçусем вăйланса пыраççĕ.

ГРЕЦИЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН НАЦИ КОМИТЕЧĔПЕ ЮГОСЛАВИ ПĔР-ПĔРИНПЕ ТӲРЕХ ÇЫХĂНСА ТĂМА ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци паян çапла пĕлтернĕ: Грецие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ (ăна Бакирджио полковник ертсе пырать) тата Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ (ăна Тито маршал ертсе пырать) пĕр-пĕринпе тӳрех çыхăнма пуçланă. Çав комитетсем пĕр-пĕрин патне представительсем янă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

Чебторга столяр мастерскойĕнче ĕçлеме столярсемпе учениксем кирлĕ тата бухгалтерсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг.

Шупашкарти çăкăр пĕçерекен комбината васкавлăн кассир тата счетовод кирлĕ.
Адрес: гор. Чебоксары, Аптечная, 4, Бухгалтерия хлебокомбината. Тел. 7—11.

Полиграфи Управленине подсобнăй хуçалăхра ĕçлеме бухгалтер, кладовщик тата хир ĕçĕпе пахча ĕçне пĕлекен бригадирсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом печати, 2-й этаж, ком. № 3.

Тимĕр тытгарнă çунасем сутлăх пур. Промышленность хакĕпе сутаççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, База Чувашторга.
2—1

Медицина работникĕсен çураки вăхăтĕнчи задачисем

Çуракине кĕске срокра, лайăх пахалăхпа ирттересси колхозниксемпе колхозницăсем, колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен работникĕсем уйхирсенче вăй-хала шеллемесĕр, хастарлăн ĕçленинчен килет. Çак условисенче колхоз хресченĕсене, МТС-семпе совхозсенчи работникĕсене медицина тĕлĕшĕнчен пулăшасси, вĕсен сывлăхне сыхлассишĕн тăрăшасси—медицина работникĕсен ответлă та хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Иртнĕ çул пирĕн республика, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисене çĕнтерсе, тухăçлă тырпул туса илме пултарчĕ. Çавăншăн пирĕн республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш преми панă. Çак пысăк награда пирĕн колхозниксемпе колхозницăсене çеç мар, медицина работникĕсене те, кăçал уйхир ĕçĕсенче татах та тимлĕрехрех ĕçлеме хушать. Медицина работникĕсен, вăхăта вăраха ямасăр, колхозниксемпе МТС работникĕсене çураки вăхăтĕнче медицина тĕлĕшĕнчен пулăшма мĕн кирлиссене пĕтĕмпех хатĕрлесе хумалла.

Медицина работникĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем пурнăçа кĕртрĕç. Районсенчи сывлăха сыхлас ĕç пайĕсен пурин те ĕç планĕсем пур. Вĕсене медицина работникĕсен районсенчи канашлăвĕсенче пăхса тухса çирĕплетнĕ. Çав план тăрăх, кашни врача, фельдшера, медицина сестрине уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Районсенче колхозсенчи сестрасен курсне организацилеснĕ. Унта çамрăк колхозницăсем ĕçсыннисене медицина пулăшăвне пама вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне общественнăй инспекторсем хатĕрлекен курссем ĕçлеççĕ. Çураки вăхăтĕнче кашни бригадăрах пĕр инспектор пулмалла.

Колхозсенче çуллахи вăхăтра ĕçлекен яслисене уçма хатĕрленеççĕ. Хальхи вăхăтра яслисем валли çуртсем, инвентарь хатĕрлеççĕ, яслине çӳреме тивĕçлĕ ачасене шута илеççĕ. Çураки тата çуллахи вăхăтра кирлĕ эмелсене хатĕрлес енĕпе те чылай ĕçсем тунă. Колхозсенчи бригадăсем валли 5.000 аптечка хатĕрленĕ, вĕсенчен 1.500-ĕшне вырăнсене янă та ĕнтĕ. Унсăр пуçне районри аптекăсем те колхозсем валли аптечкăсем хатĕрлеççĕ. Санитари пунктчĕсем тĕрлĕ брошюрăсем кăларма тытăннă. Ку тарĕнччен ачасене тĕрлĕ чир-чĕрсенчен сыхлама вĕрентекен брошюрăсене кăларнă та ĕнтĕ.

Анчах та тунă ĕçсем халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен организацисем колхозниксемпе МТС работникĕсене медицина енĕпе пулăшма тĕплĕн хатĕрленсе çитнине пĕлтермеççĕ-ха. Вĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. Ку тарана çитсе те республикăри врачсен пунктчĕсенчен 8-ĕшĕнче врачсем çук. Яслисенче ĕçлеме работниксене вĕрентсе хатĕрлесси сӳрĕк пырать. Вырăнсене вар-хырăм чирĕсенчен сыватмалли эмелсем çителĕклĕ кӳрсе пыман.

Колхозсен уйхирĕсенче кĕçех çуркуннехи хĕрӳллĕ ĕçсем пуçланаççĕ. Медицина работникĕсен çак сывăх кунсенчех çуркуннехи вăхăтра кăтартуллăн ĕçлеме тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле. Кашни колхозра ача яслисем уçмалла. Вĕсенче ĕçлеме пултаруллă хĕрарăмсене суйласа илсе лартмалла. Яслисене пулăшма ялти актива, комсомол тата пионер организацийĕсене явăçтармалла. Кашни яслĕрех çирĕп йĕрке, тивĕçлĕ тасалăх пултăр. Районсенчи сывлăх пайĕсен çураки вăхăтĕнче колхозниксемпе колхозницăсене амбулаторисенче хăш вăхăтра йышăнмаллине кăтартса памалла. Ялти амбулаторисен, аптекăсен ĕçĕсене пĕтĕмпех çураки ĕçĕсене пăхăнтармалла.

Колхоз хресченĕсен тата совхозсемпе МТС работникĕсен сывлăхне упрас, ялсенче чир-чĕрсем сарăлассинчен сыхланас тесен, санитари ĕçне татăкланах лайăхлатни кирлĕ. Медицина учрежденийĕсен пур ялсенче те тасалăх тăвассишĕн кĕрешмелле. Çуркуннехи вăхăтра халăх пурăнакан вырăнсене тĕплĕн тасатса вĕсене яланах йĕркелĕн те таса тытмалла тăвас пулать. Çак ĕçе тума санитари инспекторĕсемпе колхоз активĕсене анлăн явăçтармалла.

Халăха вар-хырăм чирĕнчен сыхлас тĕлĕшпе уйрăмăнах тимлĕн ĕçлени кирлĕ. Халĕ, çуркуннехи вăхăтра, çăлсене тасатмалла, çăлсенчен шыв ăсма уйрăм витресем уйăрмалла. Колхозсенчи тата МТС-сенчи столовăйсенче йĕркелĕхпе тасалăх тăвас пулать. Унта ĕçлекенсен сывлăхне час-часах тĕрĕслесе тămалла. Уйхирсенче ĕçлекен колхозниксем патне вĕретсе сивĕтнĕ шыв тăратмалла. Вар-хырăм чирĕпе чирленĕ çынсене çийĕнчех больницăсене вырнаçтармалла.

Медицина работникĕсем уйрăмăнах кĕçĕ чирĕпе кĕрешесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Пирĕн кĕçĕ чирне тĕпĕ йĕрĕпех пĕтерме мĕн кирлисем пурте пур. Ăна тумалла та. Трахома чирне пĕтерессишĕн кĕрешессипе те йăлаплатмалла мар. Сив чире хирĕç кĕрешессипе те татăклăнах лайăхлатмалла. Республикăри медицинăн учрежденийĕсен çав чирпе чирлекен çынсене пĕтĕмпех шута илсе, вĕсене сыватас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Çавăнпа пĕрлех сив чирĕ сарăлассинчен сыхланма кирлĕ мероприятисене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырас пулать. Сив чирне сарăлма май паракан тĕрлĕ шурлăхсене, пĕтермелле, пĕвесене, çăлсене тасатмалла т. ыт. те.

Колхозниксен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе санитари паспорчĕсем туни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мĕншĕн тесен вăл паспортсем колхозниксен çуртĕнче мĕнле тасалăх пулнине, колхозниксен сывлăхĕ мĕнлине сăнаса тăма май параççĕ. Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ ялсене 250 пин ытла санитари паспорчĕ янă. Çав паспортсене тĕрĕс те тирпейлĕн çырса пымалла.

Ялти медицина работникĕсене хуласенчи тата госпитальсенчи медицина работникĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Çак ĕçе пирĕн пур майсемпе те сарса пымалла тăвас пулать.

Медицина работникĕсем умĕнче тăракан ответлă задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур организацисен ĕçне тĕпренех лайăхлатни кирлĕ. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен медицина работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Медицина работникĕсем, партипе комсомол организацийĕсем пулăшса пырсан, ялти активпа пĕрле колхозниксемпе колхозницăсене тата совхозсемпе МТС-сенчи работниксене медицина тĕлĕшĕнчен пулăшас ĕçе большевикла организацилеме пултараççĕ. Çавна тума хушать Тăван çĕршыв.

Т. КЛЕМЕНТЬЕВА,
Медицинăпа санитари работникĕсен Союзĕн Обкомĕн председатель заместителĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ-00598 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз